## Тăван чĕлхе

Тăван чĕлхем ыран пĕтес пулсассăн,
Эп хатĕр паянах çĕре кĕме.

*Р. Гамзатов*

Вĕç-хĕррисĕр
Раççей çĕрĕнче
Миçе пин юханшыв юхать-ши?
Шăнкăр-шăнкăр шывсем хушшииче
Чи илемлĕ сасли хăшĕ-ши?
Хăшĕ-ши? Кам пĕлет-ши çакна?
Кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи.
Вăл илет те пĕрре тыткăна,
Çак вара — чи ырри, лайăххи.
Малтанхи «аннерен», «аттерен»
Тин çеç илтнĕ «нейтрино» таран
Пĕтĕмпех эс тирпейлĕн илен,
Хăв сăмах хутаçне пуçтаран.
Çав хутаç ылтăнран та паха,
Мухтанатпăр эпир унпалан.
Тав тăватпăр тăван халăха
Çав хутаç кăтартмалăх пуртан.
Эй, чĕлхемçĕм, сана юратса
Çак сăвва эп çыратăп чунтан
Ирхи сывлăм пек эсĕ таса,
Эс хрусталь чечек пек янăран.
...Кĕмĕл саслă çинçе хĕлĕхе
Чĕтрентерчĕ-им лĕп çил килсе?
Çук, ку çепĕççĕн пирĕн чĕлхе
Янăрать эфирта чӳхенсе.
Çиçĕм çиçрĕ йăлт-ялт, аслати
Шартлаттарчĕ таçта çывăхрах.
Чипер чух аслати пулать-и –
Шартлаттарчĕ ку пирĕн сăмах!
Эй, чĕлхем, анне панă чĕлхем,
Янăра эсĕ çут тĕнчере.
Ыттине çĕр чĕлхе эп пĕлем,
Эсĕ манăн – пĕрре çеç, пĕрре!

*1969–79*

*Сандров, Н. Тăван чĕлхе : [сăвă] // Сандров, Н. Сăвăсемпе поэмăсем / Н. Сандров. – Шупашкар, 1981. – С. 17.*